Чаплина В. Константин Иванов палӑкӗ умӗнче: [сӑвӑ] / Валентина Чаплина; Г. Юмарт куҫарнӑ // Ҫилҫунат. – 1991. - № 4-5. – С. 3.

# Константин Иванов палӑкӗ умӗнче

Ҫитрӗҫ те хаваслӑ ҫамрӑксем
Сырчӗҫ илчӗҫ сӑвӑҫ палӑкне.
Тупалакӑн хӗрлӗ ҫеҫкисем
Ӑшшӑн-ӑшшӑн выртрӗҫ ун умне.

Вӑштӑр-вӑштӑр ҫилӗн кӗввипе
Юхрӗ сӑвӑ тавраналь сквертан.
Хурланса хӳхлерӗҫ Нарспипе,
Сетнере те асӑнчӗҫ унтан.

Шӑпланаҫҫӗ, путрӗҫ шухӑша,
Пӑлханулла кӑмӑл чӗрере.
Халь, Поэзи, сар хӗре-яшӑ
Эс ертсе ҫӳретӗн инҫетре.

Тен, пӗри, сисмесӗр алӑра
Пӗтӗрӳҫӗн курӑк ҫулҫине,
Сӑвӑҫпа тӗл пулнӑ авӑкра,
Туйрӗ пулӗ хӑй те сӑвӑҫне.

Вӗри юн унра вылянӑран,
Тен, ӑнкараймарӗ пӗтӗмпе:
Ун малашлӑхӗ ҫак самантран
Туслӑ пуласса Поэзипе.

**Г. ЮМАРТ** куҫарнӑ.